Право

# Тимлĕрех пулăр: суя укçа!



***Хаçатăн иртнĕ номерĕнче район тăрăхĕнче пĕр пин тенкĕлĕх суя укçасем алăран алăна çӳрени пирки çырнăччĕ. Ун йышши тĕслĕхсем иртнĕ çулта та тĕл пулнăччĕ. Мĕнле паллăсемпе уйăрма пулать-ха ăна, алăра суя укçа лексен мĕн тумаллаха? Çакăн тавра калаçма чĕнтĕмĕр эпир хаçат редакцине шалти ĕçсен пайĕн ертӳçине Е.Д. МАКАРОВА:***

– Ултавлă укçасене Муркаш районĕнче хатĕрленине палăртман. Анчах та вĕсемпе усă курнă тĕслĕхсем тĕл пулчĕç. Пĕр пин тенкĕлĕх купюрăсен номерĕсем çакăн пек: ОИ №5637308, ОЗ № 3865413, ИЛ №1443408.

Çакнашкал суя билетсен номерĕсен варианчĕсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Паянхи кун суя укçа саракан тĕслĕхсене Раççей Федерацийĕн 28 ытла регионĕнче тупса палăртнă. Саккуна пăсакансем 1000 тенкĕлĕх купюрăсене хатĕрлесе сарма шикленмеççĕ те. Тĕпрен илсен, вĕсем лавккасенче, пасарсенче, ялсем тăрăх суту-илӳ туса çӳрекенсенче тĕл пулаççĕ. Ытларах чухне суя укçана тĕрлĕ тĕслĕ копи тăвакан техникăпа хатĕрленĕ. Тĕплĕнрех тинкерсе пăхсан вĕсене чăннинчен çăмăллăнах уйăрма пулать.

Çавăнпа та тĕслĕ копи тăвакан техникăпа асăрханулла пулмалла. Ăна ятарлă пӳлĕмре тытмалла. Кам епле документ кăларнине палăртса хумалла.

Çапах та, тимсĕрлĕхе пула, суя укçасем ахаль çынсен аллине лекеççĕ. Вĕсем вара ултавлă купюрăсемпе тĕрлĕ тӳлевсем вăхăтĕнче усă кураççĕ. Хăшĕ суя укçа пулнине пĕлсе тăрсах усă курать. Тепри вара – пĕлеймесĕр. Çапах та çакăн пек пăтăрмах сирĕнпе сиксе ан тухтăр тесен ултавлă укçа паллисене астуса юлма тăрăшмалла. Вĕсен уйрăмлăхĕсем çапларах: тытса пăхсан, купюра хучĕ çемçе тата кăпăшрах; ӳкерчĕкĕ шуранка тата уçăмлах мар, хӳтĕлев чĕлкĕшĕсем (волокно) тата паллисем çук; купюрăна хуçлатнă вырăнта сăрри каять.

Чылайăшĕ астăвать пулĕ, 2004 çултан пуçласа Раççей Банкĕн билечĕсем çине хӳтĕлевĕн хушма степенĕсене кĕртнĕ:

1. Куçа курăнман нумай тĕслĕ йăрăмсем (пур номинал çинче те). Банкнотăн пиччен енĕнче çӳхе параллеллĕ йĕрсемпе тултарнă вырăн пур. Банкнотăна шĕвĕр кĕтеспе пăхсан çав вырăнта нумай тĕслĕ йăрăмсем тухма кирлĕ.

2. Микроперфораци (100, 500, 1000 тенкĕлĕх билетсем çинче). Укçана çутта хирĕç тытсан, номиналăн пĕчĕк шăтăкĕсенчен йĕркеленнĕ цифрăллă пĕлтерĕшĕ курăнать. Анчах та шăтăкĕсен вырăнĕнчи хут тикĕс те яка пулмалла.

3. Çухалакан металланă çип (пур номинал çинче те). Ку çип купюрăн хыçал енчен – пунктир йĕр тăвакан çум тӳркĕтеслĕхсем евĕр. Çутă çинче – пĕр тĕттĕм йăрăм.

4. Тĕсĕ улшăнакан сăрăпа ӳкернĕ герб (1000 тенкĕлĕх билетсем çинче). 1000 тенкĕлĕх банкнота çинче ӳкернĕ Ярославль хулин гербĕн сăрри, тĕрлĕ кĕтесрен пăхсан, çутă хĕрлĕрен ылтăн симĕсе улшăнать.

Ултавлă укçасем хамăр тăрăха ытти регионсене ĕçлеме çӳрекенсем урлă та килеççĕ. Çавăнпа та хăш тăрăхра укçана илетĕр, çавнашкалах çавăнтах тĕрĕслеттерме тăрăшăр. Кăнтăр, Çурçĕр регионсенчен хуçалăхсене ял хуçалăх продукцийĕсене туянма килеççĕ. Чăн укçасем хушшине ултавлисене хураççĕ. Шел пулин те, ун пек тĕслĕхсем тĕл пулкаларĕç. Çавăнпа та хуçалăх ертӳçисене пысăк укçасем илсе юлсан çийĕнчех банка кайса тĕрĕслеттерме ыйтасшăн. Тата документсене те тĕрĕс, кирлĕ пек çырмалла.

Чылайăшĕ çул хĕррисене хушма хуçалăхра туса илнĕ продукцисене сутма тухать. Туянакансем вара ултавлă укçасем парса хăварма тăрăшаççĕ. Ытларах ватă çынсене тата ачасене улталаççĕ.

Енчен те алăра шанчăксăр пек туйăнакан укçа лекрĕ пулсан, тыттаракансене хăвăр ултава сиснине ан палăртăр. Çавăн пекех купюрăна каялла тавăрса пама та ан пикенĕр. Çапах та ултав ĕç тăвакана тĕрлĕ сăлтав тупса вăрах тытса чарма тăрăшăр. Пĕр-пĕр сăлтав пуррине палăртăр, тухса милици ĕçченĕсем патне шăнкăравлама тăрăшăр. Енчен те çакăн пек май килмерĕ пулсан, ултавçăн паллисене лайăх сăнăр, астуса юлма тăрăшăр. Çавăн пекех вăл ларнă машина номерне, паллине тĕплĕн пăхса юлăр. Ют çĕр-шыв валютисемпе те асăрханулла пулмалла, ятарлă пунктсенче кăна улăштармалла.

Çакна вара уйрăмах палăртса хăваратăп. Алла суя укçа çаклансан ăна тĕрлĕ тӳлев тунă çĕре усă ан курăр. Çапла туни те преступлени шутне кĕрет.

Банкăн суя билечĕсене вырнаçтарас тĕллевпе хатĕрлени е вырнаçтарни саккунăн 186 статйине пăсни пулать. Саккунпа килĕшӳллĕн 5 çултан пуçласа 15 çул таранах ирĕкрен хăтарма, пĕр миллион тенкĕ таранах штраф пама пултараççĕ. Çӳлерех асăннă тĕслĕхсем патшалăха хирĕç тунă йывăр преступленисен шутне кĕреççĕ. Çак йĕркесĕрлĕхпе милици ĕçченĕсем, ФСБ ĕçченĕсем тата ытти йĕрке сыхлавçисем ĕçлеççĕ. Авалхи тапхăрсенче вара суя укçасем хатĕрленĕшĕн, вырнаçтарнăшăн хытă айăпланă, вĕсем тĕрмерен те тухса пĕтеймен.

Укçана алла тытсан, ăна тимлĕрех пăхма ан манăр. Çапах та сирĕн иккĕленӳ çуралчĕ пулсан, шалти ĕçсен пайне 2-16-67 (дежурнăй), 2-11-59 (ШĔП пуçлăхĕ) номерсемпе шăнкăравлăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

Ял хуçалăхĕнче

# Лару-тăру вырăнтан тапранма хистет

Ял хуçалăхĕсенче пухусем майĕпен вĕçленсе пыраççĕ. Мартăн 21-мĕшĕнче вара Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра пулса иртнĕ. Çакă Пĕрлехи информаци кунĕпе пĕр килчĕ. “Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци” патшалăх учрежденийĕн пуçлăхĕ Н.С. Яковлев, ЧР Патшалăх ветеринари службин ертӳçи В.К. Тихонов килсе çитрĕç.

Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллаштарчĕ. Чкалов, Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхсене çитсе курчĕç. Вырăнти ĕç çыннисемпе тĕл пулу ирттерсе тĕрлĕ ыйтăва хускатрĕç.

Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăх пухăвне район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов килсе çитрĕ. Ял хуçалăх ĕçченĕсем йышлăн пухăннă. Вĕсене хуçалăх çулталăка тăкакапа вĕçлени пăшăрхантарать. Пухăва уçнă май хуçалăх ертӳçи В.П. Морозов пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллаштарчĕ. Çакăнтан вара, малалла кайман çын каялла каять тенĕ евĕр, пĕтĕмĕшле ӳкерчĕк тухса тăчĕ.

Пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене 551 гектар çинчен 10211 центнер пухса кĕртнĕ. Унăн тухăçлăхĕ 18,5 центнерпа танлашнă. 2005 çул вара 23,7 центнер пулнă. Çĕр улми 29 гектар çине лартнă. Унăн тухăçлăхĕ пĕр гектартан 126,6 центнерпа танлашнă. 2005 çул 173,9 центнер пулнă. Пĕр гектартан 200 центнер тымар-çимĕç туса илнĕ, çакă 2005 çулхинчен 50 центнер сахалтарах.

3255 центнер сĕте 1734 пин тенкĕлĕх сутнă. Çакă 2005 çулхинчен 867 центнер тата 730 пин тенкĕ сахалтарах. Выльăх чĕрĕ виçепе 917 центнер 3178 пин тенкĕлĕх сутнă. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи тăкак 2006 çулта 1707 пин тенкĕпе танлашнă. Хуçалăхри чылай кăтартăва илес пулсан вăл чакни курăнать. Çакă вара çулталăкăн пĕтĕмĕшле тăкакĕ патне илсе çитерет. Ял хуçалăх продукцине реализацилесси 1351 пин тенкĕлĕх тăкак кӳнĕ. Продукци туса илес кăтарту чакса пырать, хăйхаклăхĕ вара ӳсет. Вăтам ĕç укçи пĕр çын пуçне 1695 тенкĕпе танлашать.

Пухăвăн малаллахи ĕçне тĕрĕслев канашĕн отчечĕ тăсрĕ. Укçа-тенкĕпе çыхăннă чылай документăн тупсăмĕ паллă мар. Тата ытти пăтăрмахсем пирки тивĕçлĕ документ, хурав çук.

Хуçалăхри отчетлă пуху çулталăкра пĕрре пулать, анчах та хăш-пĕр тĕп специалистсем унта пыма май тупайман. Çакăн хуравне тупас пулсан та пуçа ытларах çĕмĕрттерме кирлĕ мар пулĕ. Çавăн пекех хуçалăх чылай вăхăт хушши бухгалтерсăр ĕçлесе пырать.

Пухăва малалла А.Н. Иванов тăсрĕ. Йывăрлăхран тухас тĕрлĕ çул-йĕре сӳтсе яврĕ. Çăмăллатнă кредитсем пирки тĕплĕн ăнлантарчĕ. 2007 çулта ăнăçлăрах ĕçлеме сунчĕ, ĕç дисциплинине çирĕплетме, кадрсем енĕпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма сĕнчĕ.

Хуçалăхшăн йывăр çулталăк пулни пĕр-икĕ çын айăпĕ кăна мар пулĕ. Палăртма кăмăллă, хуçалăх ĕçченĕсем те йывăр лав майĕпен тапранасса шанаççĕ, кĕтеççĕ. Çапах та вĕсем тăрăшнă, ĕçленĕ. Çавăнпа та ĕçре малта пыракансене Хисеп хучĕсем тата укçан премисем парса хавхалантарчĕ В.П. Морозов.

Çавăн пекех пухура тĕрлĕ ыйтусемпе тухса калаçрĕç, пĕрле сӳтсе яврĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ларусем иртрĕç

# Инкек пуласса кĕтмелле мар

Иртнĕ ытлари кун Муркаш районĕнчи чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарас тата пĕтерес, пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен комисси ларăвĕ пулчĕ. Унта ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те хутшăнчĕç. Чи малтанах район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Н. П. Милютин çурхи ейĕве йĕркеллĕ ирттерсе ямалли çинче чарăнчĕ. Ку тĕлĕшпе вырăнсенче яваплăха туйса ĕçлемеллине палăртрĕ.

Кайăк-кĕшĕк чирĕн хăрушлăхĕ те паян иртсе кайнă теме иртерех-ха. Çавăнпа та кун йĕркине ку ыйтăва кĕртни те ăнсăртран мар. “Муркаш районĕнчи выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станци” патшалăх учреждени ертӳçи Н. С. Яковлев пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çул мĕн пур чăхчĕпе виçĕ хутчен прививка тунă. Кăçал чи малтанах теветкеллĕ вырăнсенчи кайăккĕшĕке прививка тăваççĕ. Кунта çул хĕрринче вырнаçнă тата чăх-чĕп фабрики çывăхĕнче вырнаçнă ялсем кĕреççĕ. Вакцинăсен пĕрремĕш партийĕ района 60 пин доза килнĕ. Иккĕмĕш хут вăл март уйăхĕнче çитмелле. Кăçал та районти пур кайăккĕшĕке вакцинацилеме палăртнă.

Николай Семенович çавăн пекех килти хур-чăхсене картишне кăлармасăр усрани чир ерес хăрушлăха чакарнине палăртрĕ. Иккĕлентерекен сăлтавсем пулсан тӳрĕ лини телефонĕпе 2-18-62 е 2-18-46 номерсемпе шăнкăравламаллине каларĕ.

Çуркунне çитнĕ май таврара пушар тухас хăрушлăх та сиксе тухма пултарать. Пĕлтĕр 49 хутчен тухнă вут-кăварта 12 çыннăн пурнăçĕ татăлни хăех пире тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тума хистет. Кăçалхи виççĕмĕш уйăх вĕçленеймен пулин те, районта 3 пушар пулчĕ те ĕнтĕ. Каллех пĕр çын пурнăçĕ татăлчĕ. Районти пушар чаçĕн ертӳçи И. Н. Смирнов каланă тăрăх, инкек ытларах ӳсĕр çынсен айăпĕпе тухать.

-7 хуçалăхра çеç пушар машинисем юсавлă. “Передовик” ку тĕлĕшпе уйăрнă укçана илнĕ пулсан та, машинăна ĕçлеттермелле туса çитереймерĕç-ха. Чуманкассипе Хорнуй ял тăрăхĕсенче те ку ĕçе хăвăртлатмалла, - палăртрĕ вăл.

Ларура çавăн пекех шыв пахалăхĕ пирки те пулчĕ калаçу. Ку ыйтупа Çĕнĕ Шупашкарти Чăваш Республикипе ĕçлекен Роспотребнадзорăн Управленийĕн территории пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ Г.Г. Воробьева тухса калаçрĕ.

Инкек пуласса кĕтмелле мар. Вырăнсенче хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса пурăнасчĕ. Çакă хамăршăнах лайăх. Пурнăç çирĕплетнĕ çак тĕрĕслĕхе хамăр явапсăрлăхпа пăсса хамăрах шар кăтартас марччĕ.

# Йăлтах вăхăтра тумалла

Чи малтанах район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ - культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А. Е. Андреева районта тĕслĕх библиотекăсем уçма хатĕрленес ĕçсем епле пынипе паллаштарчĕ. Кĕске вăхăтрах кăçал районта 14 тĕслĕх библиотека уçăлмалла. Унччен вара кирлĕ оборудование кӳрсе килмелле. Тĕслĕхлĕ библиотекăсене уçмалли график хатĕр. Кăçал пĕрремĕш çакнашкал библиотека Шомикра апрелĕн 13-мĕшĕнче уçăлмалла.

Алевтина Евстафьевна çавăн пекех ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем кăçалхи иккĕмĕш çур çул валли хаçат-журнал çырăнтарас ĕçе лайăх йĕркелессе шаннине те палăртрĕ. Çак ĕçе хаксем йӳнĕрех чух – март вĕçĕччен туса юлсан аванни пирки каларĕ. Çакă районта пурăнакан пур çынна та пырса тивет.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен паян татса памалли ыйтусем пĕрин хыççăн тепри тупăнсах тăраççĕ. Тĕслĕхрен, çĕр лаптăкĕсене патшалăх кадастр учетне тата куçман харпăрлăха патшалăх учетне илессипе ĕçлесси те паян ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен кун йĕркинчен тухса ӳкмелле мар. Тĕрĕсрех каласан, чи малтан татса памалли ыйтусенчен пĕри пулмалла. Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А. Н. Иванов, пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ А. В. Петров ку ыйтăва уçăмлăх кĕртрĕç.

Вырăнсенче çине тăрса пурнăçламалли тепĕр ĕç вăл – ял хуçалăх кооперативĕсене туса хурасси. Ку ыйтупа ЧР Президенчĕ Н. В. Федоров кашни ял тăрăхĕнчех ял хуçалăх кооперативĕсем тумалла тенине лайăххăх астăваççĕ пулĕ–ха. Район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова пĕлтернинчен çакă палăрать. Районта паянхи куна 11 ял хуçалăх потребительсен кооперативĕ йĕркеленнĕ. Вĕсенчен виççĕшĕ – кредит кооперативĕсем. Оринин, Турай, Чуманкасси, Шетмĕпуç, Йӳçкасси, Ярапайкасси, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенче хальлĕхе ял хуçалăх кооперативĕсене йĕркелемен-ха. Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче ку енĕпе тивĕçлĕ документсем хатĕрлеççĕ.

Кунта çакна асăнса хăвармалла. Потребительсен кооперативĕсен патшалăх пулăшăвне илме ЧР Ял хуçалăх министерствинче аккредитаци витĕр тухмалла. Пирĕн районти виçĕ кооператив ку ыйтăва татса пачĕç ĕнтĕ. Тепĕр иккĕшĕ аккредитаци витĕр тухма документсем хатĕрлеççĕ.

Эльвира Иосифовна хăйĕн сăмахĕнче тата çакна палăртрĕ. Ял хуçалăх кооперативĕсене йĕркелеме шикленсе тăмалла мар. Вĕсенчен ял хуçалăх налукне тытнисĕр пуçне урăх налук тытмаççĕ. Ял хуçалăх налукĕн калăпăшĕ вара пысăках мар: илнĕ тупăшăн 5 проценчĕ чухлĕ.

Ларура çавăн пекех “Россельхозбанкăн” пирĕн районти офисĕн управляющийĕ И. В. Павлова тухса калаçрĕ, банк паракан пулăшусемпе паллаштарчĕ.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем çавăн пекех куллен тĕл пулакан ыйтусем тавра та калаçрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Юратнă мăшăра, аннене, хунямана, асаннене – Чамăш ялĕнче пурăнакан **Раиса Васильевна РЕМНЕВАНА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Сурпан пек вăрăм кун-çул, юман пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Пурнăç çулĕ çинчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма вăйхăвату тупăнсах тăтăр, питӳ çинчен савăк кулă ан кайтăр.

**Салампа мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**



Дорогая, любимая, ласковая
**Людмила Геннадьевна!**

От души, от всего сердца поздравляем с днем рождения.

Желаем мы тебе здоровья и удач.
Пусть рядом будут радость и мечта.
И пусть из всех женских моральных качеств,
В тебе сильнейшей остается доброта.

Людмила Геннадьевна, большое вам спасибо за ласковые слова, за чуткое внимание к нам, инвалидам и ветеранам.

Пусть всегда над головой твоей будет ясное теплое солнце, голубое чистое мирное небо.

**С поздравлением жильцы Б. Сундырского дома-ветеранов.**

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, мăшăра, юратнă аннене, хунямана, ырă кăмăллă асаннене – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Раиса Романовна ФУТЛЯРОВАНА** 75 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Çурхи çак илемлĕ кун ячĕпе саламласа эпир ăна вăл пирĕншĕн тунă ĕççемшĕн çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр.



Юратнă çыннăмăр! Эсĕ ĕмĕрĕпе Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăхра ĕçлесе мăшăрупа икĕ ывăлпа виçĕ хĕр çуратса ӳстертĕн, кашнинех тивĕçлĕ пĕлӳ парса çĕршыва юрăхлă турăн. Паян вĕсен кашнин хăйĕн çемйи. Вĕсен кашнин хăйĕн кĕтесĕ пулсан та, эсĕ упракан тăван кил ăшшине самантлăха та манмаççĕ.

Тавах сана, эсĕ пурришĕн,
Пире кĕтсе алăк уçнишĕн,
Алтăрпала сăра панишĕн
Йывăрлăхра алă тăснишĕн.

**Салампа: мăшăрĕ, 2 ывăлĕ, кинĕсем, 3 хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, 10 мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, çывăх тăванĕсем, кӳршисем.**



Шурчара пурăнакан тата Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулта ачасене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекене, хисеплĕ ĕçтешĕмĕре **Нина Михайловна ТЮРИНАНА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Сирĕн ĕçĕр паха вăрлăх пекех: эсир вĕрентнĕ вуншар-çĕршер ача паян çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче вăй хурать, тăван ен, Тăван çĕршыв тĕреклĕхне вăйлатать, илемне ӳстерет.

Нина Михайловна, сирĕн хăвăр суйласа илнĕ ĕçре татах нумай çул ĕçлесе çамрăк ăрăва пурнăçăн тĕрĕс çулĕ çине тухма пулăшмалла пултăр. Çакна валли сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

**Салампа Шурча шкулĕн коллективĕ.**